Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

53 (7907) № * Юн кун, 2011 çулхи утă (июль) уйăхĕн 13-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Апат пахалăхĕ пысăк шайра пулĕ

Симĕс ĕç çи

***Çакнашкал пĕтĕмлетӳ турăмăр эпир Ильич яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн Уйкас Янасалти сĕт ферминче пулса курнă хыççăн. Эпир çитнĕ чух силос траншейи чĕрĕ массăпа тулнăччĕ ĕнтĕ. Саша Александров ДТ-75 тракторпа пĕр чарăнмасăр ешĕл массăна пусăрăнтарассипе ĕçлетчĕ. Пире курсан вăл «хурçă ута» йăпăртлăха чарса кабинăран тухрĕ. Ĕç кал-кал пынăран-тăр унăн питĕнче савăнăç кулли кăна.***





*Районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци пуçлăхĕн çумĕ О. Воробьев тата район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Т. Алексеева А. Петров, А. Александров механизаторсемпе.*

*Ешĕл масса траншейăна тăтăш килсе тăни технологие çирĕп пăхăнса пыма пулăшать.*

*Силос траншейи çинче ĕç самантлăха та чарăнмасть.*



– Пурте яваплăха туйса ĕçлеççĕ те пĕр саманта та пушшăн ирттерес килмест. Авă ешĕл масса тиенĕ автомашинăсем пĕрин хыççăн тепри траншейăна кĕреççĕ. 10 минут чарăнса ларсанах трактор «утайми» пулать, – пирĕнпе калаçнă çĕртен васкаварлăн «хурçă ут» кабинине улăхнă май калаçрĕ тракторист.

Хирте курăк çулакан А. Васильевпа В. Егоров механизаторсем вара водительсене пĕр самант та канса ларма памаççĕ. Ю. Мадиков, Ю. Михайлов, И. Никитин, В. Ильин водительсем хăйсем умне лартнă тĕллевшĕн ответлăха туйса ĕçлеççĕ. Технологие пăхăнса вăй хунăран хуçалăхри выльăх апачĕн пахалăхĕ те лайăх пуласси пирки паян иккĕленӳ çук.

Хуçалăхра выльăх апачĕ янтăланипе пĕрлех ĕнесем валли симĕс конвейер та кал-кал ĕçлет. Пĕрлехи тăрăшулăх вара ĕç кăтартăвне çаврăнать. Паян хуçалăхри ĕнесем талăксерен вăтамран 16,8 килограмм сĕт антараççĕ. Сарайсенче тирпейлĕ. Ĕнесем валли ешĕл масса кĕртсе хунă.

**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Симĕс ĕç çи – 2011

## Хальлĕхе сенаж хатĕрлемен

Ут çи вăй илнĕ вăхăт. Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ĕçлекенсем иртен пуçласа каç сĕмĕ пусиччenех улăх-çаранта. Уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курса хресчен хĕл каçма выльăх апачĕ янтăлать.

Оперативлă кăтартусене пăхсан çĕр ĕçченĕ утă хатĕрлессине иртнĕ çул шайне хăвалать те ĕнтĕ. Утă уйăхĕн 12-мĕшĕ тĕлне пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем пĕтĕмпе 4496 тонна (82 процент) курăк типĕтсе управа хунă. Планпа пăхнă 6600 тонна сенажран хальлĕхе нимĕн те çук. Апла пулсан та хуçалăхсен ĕçченĕсем силос хатĕрлессипе çанă тавăрсах ĕçлеççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне пурĕ 7435 тонна (40,2 процент) силос траншейăсене хывнă.

«ВТМ» чикĕллĕ яваплăхлă общество 15 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрленĕ.

Хирсенче выльăх апачĕ янтăлассипе пурĕ 42 техника ĕçлет.

**Хамăр инф.**

Инкек

## 79 çын çеç çăлăннă

Ĕнер Раççейре «Булгария» теплоход çинчи çынсем путса вилнине асăнса Траур кунĕ иртрĕ.

Июлĕн 10-мĕшĕнче Пăлхар – Хусан экскурси маршручĕпе çула тухнă теплоход кăнтăр кунĕнче Куйбышев шыв хранилищинче штрум вăхăтĕнче путнă. Вăл 3 минут хушшинчех хумсем айĕнче çухалнă.

Теплоход 140 çынна йышăнма пултарать. Анчах борт çинче 208 çын таран пулнă. 79-шĕ çеç çăлăнма пултарнă.

Теплоход ишеве тухнă чухнех юсавсăр пулнине палăртаççĕ. Унăн пĕр двигателĕ ĕçлемен. Карап сылтăм енне чалăшнă пулнă.

Тунти кунах вилнисене шывран кăларма пуçланă. Теплохода хăйне те шыв тĕпĕнчен çĕклеме палăртаççĕ.

Раççей президенчĕ хушнипе теплоход путнин сăлтавне палăртма патшалăх комиссийĕ йĕркеленĕ.

**ИТАР–ТАСС пĕлтернинчен.**

Чрезвычайлă лару-тăру

## Йывăççем тымарпах кăкланнă, пӳрт çивиттийĕсем – çĕр çинче

Июлĕн 8-мĕшĕнче, 17 сехет тĕлĕнче, Ильинка ял тăрăхĕн территорийĕнче питĕ вăйлă çил-тăвăл çирĕм минута яхăн алхаснă. Ял тăрăхне кĕрекен вун çичĕ ялтан улттăшне пысăк сиен кӳнĕ: вăйлă çил пӳртсен тата хуçалăхсенчи ытти çуртсен çивиттийĕсене каштасемпе пĕрлех çĕр çине антарса лартнă, йывăççем те тымарпах кăкланнă.

Телее, пĕр çыннăн та пурнăçĕ татăлман.

Хопкĕпер ялĕнчи лару-тăру уйрăмах йывăр: 24 хуçалăхра çивиттисене çил вĕçтерсе кайнă, пĕр пӳрте вара çĕнĕрен тума тивет. Кив Шоккăн ялĕнче йывăç ӳксе пĕр хуçалăхри мунчана пĕтĕмпех ватнă. Йывăççем кăкланнипе пĕрлех вăйлă çил уйсенчи тырă-пулăна та çĕр çумне ӳкернĕ, улма-çырла йывăççисемпе тĕммисем те пĕтнĕпе пĕрех.

Электроэнергипе шыв парассине кĕске вăхăтрах йĕркене кĕртнĕ, урлă-пирлĕ выртакан йывăççисене вырăнти çынсем хăйсемех пуçтарса тирпейленĕ.

Хальхи вăхăтра çак вырăнта чрезвычайлă комисси ĕçлет. Малтанхи пĕтĕмлетӳпе 56 хуçалăха сиен кӳнине пĕлтереççĕ, тăкак 3800 пин тенкĕпе танлашать.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчен пĕлтернĕ тăрăх кунта та вăйлă çил хăйĕн йĕрне хăварнă. Çĕн Шоккăнра тата Туçи Олкашра йывăç тăррисем хуçăлса ӳкнĕ кăна мар, пӳрт тата ытти çуртсен çивиттийĕсем те сĕвĕннĕ. Пахча çимĕç йăранĕсене, улма-çырла йывăççисене те сиен кӳнĕ. Мăн Сĕнтĕрте электричество пралукĕсем татăлнă, хăшĕ-пĕрисен йăлара усă куракан техникăна та çĕнĕ илме тивĕ. Электроэнергипе тивĕçтерессине кунта та çийĕнчех йĕркене кĕртнĕ.

Муркаш ял тăрăхĕнче те вăйлă çил хăйĕн йĕрне хăварнă: Шаптак ялĕнчи подстанцие ĕçрен кăларнă. Халĕ ăна йĕркене кĕртмеллипе ĕççем пыраççĕ.

Республикăра

## 109 çемье сертификата тивĕçнĕ

***Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Светлана Енилина Шупашкарта, Пичет çуртĕнче, пресс-конференци ирттернĕ. Нумай ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт, дача, килти хушма хуçалăхра хуралтă тума çĕр тӳлевсĕр парасси мĕнлерех пыни çинчен каласа панă.***

– Чăваш Ен Президенчĕ Михаил Игнатьев кăçалхи пушăн 4-мĕшĕнче «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене пулăшу памалли мерăсем çинчен» Указа алă пусрĕ, – терĕ Светлана Александровна. – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем уйăрса парасси çинчен» саккун йышăнчĕ. Кашни муниципалитет ăна çине тăрсах пурнăçа кĕртет. Утă уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне лаптăк илес текенсен черетне 655 çемьене тăратнă. Шута илнисем хуласенче ытларах: Шупашкарта – 327, Çĕнĕ Шупашкарта – 58, Шупашкар районĕнче – 60 çемье.

Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев пурăнмалли çурт-йĕр тăвас ĕçе вăйлатас тĕллевпе кăçалхи çĕртме уйăхĕнче РФ Çĕр кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан саккуна алă пуснă. Малашне патшалăх тата муниципалитет харпăрлăхĕнчи çĕре нумай ачаллă çемьесене çурт тума тӳлевсĕр, ăна лартассипе çыхăннă ыйтăва малтан органсемпе килĕштермесĕр, аукционра суту-илӳ йĕркелемесĕр параççĕ.

Республикăра йышлă ачаллă – 8665, тĕп хулара – 1457, Çĕнĕ Шупашкарта – 332 çемье.

Черете камсене тăратаççĕ-ха? Заявлени çырнă чухне 18 çул тултарман 3 тата ытларах ача çитĕнтерекен çемьесене. Ашшĕ-амăшĕн те, ачисен те Раççей Федерацийĕн гражданĕсем пулмалла, Чăваш Енре пурăнмалла. Черете тăма хăй тытăмлăх органне заявлени, паспорт, çурални çинчен калакан свидетельство, ытти хăш-пĕр документ кирлĕ.

«Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем уйăрса парасси çинчен» саккунра пурăнмалли çурт, дача, килти хушма хуçалăхра лупас е сарай тума чи пысăк лаптăк мĕн чухлĕ парассине уçăмлă палăртнă. Чи сахал миçе сотка лекессине асăнман. РФ Çĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн çакна регионсен кăтартмалла. Çавăнпа çывăх вăхăтра «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем уйăрса парасси çинчен» саккуна хушăмсем кĕртĕç.

Утăн 5-мĕшĕ тĕлне лаптăк илме ирĕк паракан 109 сертификат (çав шутра пурăнмалли çурт тума – 68, дача лартма – 1, килти хушма хуçалăхра хуралтă тума – 40) валеçнĕ. Мĕн пур лаптăк 12,5 га йышăнать. Хальлĕхе нумай мар. Заявлени çыракансем çывăх вăхăтра ытларах пуласса шанаççĕ.

**Ю. СЕРГЕЕВ.**

Пенси фончĕ пĕлтерет

## Амăш капиталĕпе тĕллевлĕ усă курма

Кăçал ултă уйăх вĕçленнĕ тĕле Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕнче ача амăшĕсенчен амăш (çемье) капиталĕпе тивĕçтерме ыйтса çырнă 92 заявлени йышăннă.

Амăш (çемье) капиталĕпе усă курма ыйтса çырнисем вара пурĕ 119-ăн пулнă. Вĕсенчен 84-шĕ пурăнмалли çурт-йĕр туянма (туса лартма) илнĕ ипотека кредичĕсен тĕп парăмне тӳлесе татма, 15-шĕ çурт-йĕр туянма, 10-шĕ пурăнмалли çурт-йĕр туса лартма заявлени çырса панă. Çакăнпа пĕрлех амăш (çемье) капиталĕпе çурт-йĕре реконструкцилес ĕçе пурнăçлассине 6 çын, пурăнмалли çурт-йĕре тунă чухнехи тăкаксене саплаштарассине 4 çын пĕлтернĕ.

Çырăнтару

**Хаклă вулакансем!**

**Райхаçата август уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтараççĕ. Çыхăну уйрăмĕн ĕçченĕсемпе тĕл пулма васкăр.**

# Волковсем медале тивĕçрĕç

**Ялти ятлă çынсем**



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Людмила Михайловнăпа Эрнст Андреевич Волковсем Чуманкасси ял тăрăхне кĕрекен Шарпаш ялĕнче пурăнаççĕ.***

***Ĕç ĕмĕрне мăшăр тăван хуçалăхра ирттернĕ. Людмила Михайловна Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 30 çула яхăн бригадирта вăй хунă, маларах, шкул пĕтерсен – дояркăра, Эрнст Андреевич механизаторта тăрăшнă.***

***1962-мĕш çулта çемье çавăрса пилĕк ача çуратса тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстернĕ вĕсем. Паян килти хуçалăхра май килнĕ таран выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк усраççĕ. Ачисемпе мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ те килсе тăрса савăнтараççĕ. Пурнăç çулĕ çинче пысăк хуйхă чăтса ирттерме те тиврĕ Волковсен: кĕçĕн хĕрĕн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ...***

***Пурнăç вара малаллах шăвать. Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче ав Людмила Михайловнăпа Эрнст Андреевич «Юратупа шанчăклăхшăн» медале республика Президентĕнчен аллинчен илме тивĕç пулчĕç.***

**Н. НИКОЛАЕВА** сăн ӳкерчĕкĕ.

**Пирĕн пата çыраççĕ**

# Юратупа шанчăклăх кунĕнчи телейлĕ çемьесем

Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче Москакасси ял тăрăхĕнче алла-аллăн нумай çул пĕр-пĕринпе килĕштерсе те юратса пурăннă çемьесене чысларăмăр. Çакăн пек çемьесем сахалрах çав.

Ситуккассинче пурăнакан Зоя Петровнăпа Асколон Аверкиевич Максимовсем 50 çул, Москакассинчи Зоя Никитичнăпа Алексей Филиппович Филипповсем 60 çул, Уйкас Хачăкри Мария Степановнăпа Михаил Осипович Осиповсем 65 çул пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ. Çаксем патне килĕсене çитсе уявпа саламларăмăр та ĕнтĕ эпир: Г. Голубева, Н. Кондукторова, Р. Семенов тата Р. Матросова.

Чăн малтан Максимовсем патне çитрĕмĕр. Çак çемьене чысласа ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ячĕпе Тав çырăвĕ, асăнмалăх парне тата ромашка сыххине парнелерĕмĕр. Юрă-ташăпа савăнтарса кăмăлĕсене уçрăмăр.

Филипповсен çемйинче пире кил хуçисемпе пĕрле хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем те ăшшăн кĕтсе илчĕç. Пĕр хĕрĕпе кĕрӳшĕ Якутинчен çитнĕ! Ку çемьене те уяв парнисем патăмăр.

Осиповсен çемйи те пире тулли кĕрекепе кĕтсе илчĕ. Ку çемье пирки калас пулсан каламалли чылай. Мăшăр 65 çул пĕрле аллаллăн çирĕппĕн утать. Михаил Осипович вăрçă ветеранĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче вăл фашиста тĕп тăвиччĕнех çапăçнă, Çĕнтерĕве Германире кĕтсе илнĕ. Мария Степановна тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшнă. Хурашурне нумай курма тивнĕ. Паян вара вĕсен хăйсем пекех ĕçчен те маттур ачисемпе тата мăнукĕсемпе мухтанма та май пур.

Çулĕсемпе аслăрах çынсене пирĕнтен тимлĕх тата ăшă сăмах кирлĕ, апла пулсан вĕсене çаплах майпа савăнтарасчĕ.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакасси Культура çурчĕн, ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

# Пурнăç ыйтнипе тан пырсан ӳсĕм пулатех

**Районта**

***Кирек мĕнле сферăра та çĕнĕлĕх пурнăçа кĕни ӳсĕмсем тума май парать. Çакна ăнланса вăхăт ыйтнă пек ĕçлекенсем пирĕн районта хушăнса пыни кăмăла хăпартать. Иртнĕ эрнере акă çĕнĕлĕхсене алла илсе пыракан районти хăш-пĕр хуçалăхсенче, организацисенче депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем те, предприятиорганизаци ертӳçисемпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те пулса курчĕç.***

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра сехетре 10 тонна тырă тасатса типĕтекен сушилкăна хута ярас ĕçсем пыратчĕç. Район пуçлăхĕ, хуçалăх ертӳçи И.В. Николаев çак оборудовани кăçалхи çанталăк условийĕсенче уйрăмах вырăнлă пулнине пĕлтерет. Сушилка малтанах тырра тасатать, унтан типĕтет, ăна технологи ыйтнă пек сивĕтет. Кайран вара тырра сортсем çине уйăрать. Кунта пурĕ те икĕ çын кăна ĕçлет. Ăна туянма тата вырнаçтарма хуçалăх 2 миллион та 600 пин тенкĕ тăкакланă. Сушилка уйран кĕрекен тырра çухатусемсĕр тасатса тирпейлесси вара паянах куç кĕрет.

Ярославка ял тăрăхĕнчи çемье тухтăрĕн уйрăмĕнче те малалла шанчăкпа пăхакансем вăй хуни курăнчĕ. Ял халăхне кунта килсе сипленме условисем лайăх: шăл юсама та пулать, куçлăх тутарттарма та, кăнтăрлахи уйрăмра сипленме те... «Пĕр пушă пӳлĕм «тупма» май килчĕ. Унта ЛФК (сиплĕ физкультура) пӳлĕмне уçас кăмăл пур», – теççĕ шурă халатлисем. Çакă вара чиртен сывалнă çынсене кирлĕ пек режим тытса тăма пулăшĕ. Апла пӳлĕме йĕркелесе хута яма шутласа медицина ĕçченĕсем хăйне май профилактика ĕçне те анлăлатĕç. Яланхи ыйту – пулăшакансене тупасси. Вырăнти çынсен сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн усăллă ĕçе укçа хывакан тупăнасса вара шанас килет.

Нискассинчи шкултa та хальхи вăхăтра анлă усă курakan интерактивлă доскапа ĕçлесçĕ, информаципе коммуникаци технологийĕсемпе усă кураççĕ. 2007 çулта Раççей Федерацийĕн Президентĕн грантне çĕнсе илнĕ шкулта малашлăха шанчăкпа пăхнипе пĕрлех иртнине те манмаççĕ: вырăнти истори ятарлă залта упранать.

Нискассинче икĕ çула яхăн хупă тăнă хыççăн кĕçех кафе ĕçлеме пуçламалла. Ячĕ те унăн – «Ярославна». «Ят тупассипе ял тăрăхĕнчи çынсен шухăшкăмăлне шута илтĕмĕр. Кафене юсаса çĕнетме тата унăн умне асфальт сарса тирпей-илем кĕртме 3 миллион тенкĕне яхăн уйăртăмăр», – пĕлтерчĕ Муркаш райпо канашĕн председателĕ Б.В. Андреев. Çак тăкак вара пĕтĕмпех вырăнти халăха йĕркеллĕ канса-савăнма май туса парать. Çитес вăхăтрах илемлĕ залта туйсем кĕрлесси, юбилейсем паллă тăвасси çирĕп йăлана кĕрĕ. Ку иккĕленмерместех.

Юнкă ял тăрăхĕнче вырнаçнă «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ вара çĕр улмипе купăста туса илессине тимлет. Пĕрлешӳ ертӳçи В.С. Кондратьев купăста лартмалли Голландипе туса кăларнă оборудование кăçал 2 миллион тенкĕ ытла тӳлесе илнине пĕлтерет. Лартнă калчана шăварасси тата апатлантарасси ятарлă технологипе пулса пырать – тумламмăн. Ретсем хушшипе выртакан шлангран кашни купăста туни патне тумлампа кирлĕ удобрени те, шыв та пырса тăрать. Купăста уйĕ кунта кăçал 19 гектар йышăнать. Кунсăр пуçне тата çĕр улми – 130 гектар. Çĕр улмине те çĕнĕ технологие алла илсе ӳстереççĕ.

Депутатсем, предприяти-организаци ертӳçисемпе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕпе те кăсăкланнă май Юнкă ял тăрăхĕнчи пушар хуралĕн ĕçĕпе паллашрĕç. Кунта хăй ирĕкĕпе тăватă çын ĕçлет. «Пушар машини Самар облаçĕнчен «çитнĕ» иккен. Малтан çар техники пулнăскерĕн шыв сирпĕтес пусăмĕпе хăвăртлăхĕ пысăккине ĕçпе çирĕплетсе кăтартрĕç пушар хуралçисем. Ĕçе йĕркелесе пыма ял тăрăхĕнчи çынсем пулăшнине пĕлтерчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Фомин. Кун пек пушар машини Оринин ял тăрăхĕнче те пур. Ильинка, Шетмĕпуç, Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕсем те саккас пирки калаçусем пуçарчĕç. Ытти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те ĕçпе кăсăкланни курăнчĕ.

Пуçарулăх, ĕçлес туртăм пулсан майсене тупма пулатех. Çӳлерех асăннă тĕслĕхсем çакна çирĕплетеççĕ те. Апла ыттисен те ырă тĕслĕхсем çинче çӳлерех «ӳсмелле».

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Вулакан пултарулăхĕ**

# Каçхи тĕнче

Каçхи тĕнче епле илемлĕ
Ăна пĕлсессĕн сăнама.
Утаç, кулаç яшсем
телейлĕн,
Лăпкать ыр туйăм чунăма.

Сăнать çĕре тулли çут уйăх
Тӳпе ытамĕнчен савса.
Асам-ши ку паян, е чăнлăх –
Юхать тăр шывĕ юрласа?!

Е-хей, кунта шыва кĕреç
мĕн,
Çак каç çап-çутă çăлтăрсем.
Хумсем вĕсемшĕн юр
юрлаç мĕн
Самай итлерĕм киленсех.

Самант вĕрсе илет уç çилĕ,
Лăпкать мана пит-куçăмран.
Шăрça пĕрчи пекех
илемлĕн
Çуталчĕ сывлăм кĕç умра.

Тута хĕрне эп йĕпететĕп
Унпа эп куръăка татсах.
–Мана вăй-хал кӳрсемччĕ,–
тетĕп
Асам каçа эп юратса...

Каçхи тĕнче,
сыв пуллашатăп,
Тепре тĕл пуличчен санпа.
Ирпе питех эп канлĕ çывăп,
Ирпе вăранăп кăмăлпа.

... Каçхи тĕнче епле илемлĕ,
Эсир те тухăр сăнама.
Каçхи тĕнчен асамлă пилĕ
Пурне вăй кӳрĕ пурăнма!

**И. МАЙКОВ.**
Кашмаш ялĕ.

**Реестр земельных участков, подлежащих предоставлению многодетным семьям на территории Моргаушского района**

| №№ п/п | Местоположение, адрес | Кадастровый № земельного участка | Площадь земельного участка га | Вид разрешенного использования земельного участка |
|---|---|---|---|---|
| Кадикасинское сельское поселение | | | | |
| 4-1 | Чувашская Республика, Моргаушский район, с/пос Кадикасинское, земельный участок в южной части кадастрового квартала 21:17:072501 | 21:17:072501:1596 | 0,2 | для ведения личного подсобного хозяйства |

# Вăрă-хурах ушкăнĕ тейĕн

**Саккун пуриншĕн те пĕрре**

***Муркаш район судĕнче пĕр уголовлă ĕçе тишкерчĕç, унăн айăплавçи район прокурорĕн çумĕ, юстици советникĕ Ю.М. Семенов пулчĕ.***

Ĕçĕ вара çаплах пулса иртнĕ. Тĕрĕс çул-йĕртен пăрăнма шутланă преступниксен ушкăнĕ ирхи пилĕк сехетрех вăрă ĕçне тума каварланă, çул çӳрев ăнăçлă пулма пултарассине аван чухланă вĕсем. Унччен маларах вара Вăрманкасси ялĕнче 1988 çулта çуралнă К.М. Гаврилов, тĕрĕс çултан пăрăнма ĕлкĕрнĕскер, Çĕньял Оринин ялĕнче 1992 çулта çуралнă Е.В. Казамбаева тата 2009 çултанпа шалти ĕçсен пайĕнче учетра тăракан çул çитмен пĕр çамрăк хăй майлă çавăрнă, вăрлана пурлăхшăн хавхалантару укçи шантарнă.

Унччен маларах вара ку ĕçĕн сценарине тĕплĕн хатĕрленĕ, кашни преступникăн хăйĕн ролĕ пулнă кунта. Преступлени пуçаруçи малтанхи айăплава та тăманскер пĕтĕмĕшле лару-тăрăва тишкерекенни пулнă, кĕтменлĕх пулсан ыттисене паллă парса систерме шантарнă.

Çапла вара вăрă-хурах ушкăнĕ Оринин тăрăхĕнчи çул çинче маларах палăртнă икĕ çынна кĕтсе илнĕ, вĕсене тапăннă. Çул çитмен çамрăк пĕрине çĕре туртса антарнă, «Нокия-7» телефонне туртса илнĕ. Ăна çапнă, сывлăхне сиен кӳнĕ, инкек тӳсекенĕн вара больницăна кайса пулăшу ыйтма тивнĕ. Ăна пĕтĕмĕшле 18540 тенкĕлĕх тăкак кӳнĕ. Çав хушăра Е.В. Казамбаев иккĕмĕш çыннине вăхăтлăх тытса чарнă. Çапла майпа çул çитмен çамрăка пулăшма шутланă. Преступниксен куçĕпе пăхсан ĕç ăнăçлă вĕçленнĕ. Çакăн пек ĕç-пуç хыççăн преступлени пуçаруçи К.М. Гаврилов тепĕр темиçе кунтан телефона сутнă.

Унччен маларах вара çакăн пек лару-тăру пулса иртнĕ. Çур çĕр иртни пĕр сехетре аякран эрех ĕçсе ӳсĕрĕлсе килнĕ тусюлташсем хуçалăхри хуралçă пӳртне пухăннă. Çӳлерех асăннă телефон хуçи хăй пурлăхне тата ун çинчи видеоӳкерӗве ыттисене кăтартнă, тен ыттисем умĕнче çапла майпа хăпартланма шутланă. Самай хĕрнĕскер таксист патне шăнкăравланă, эрех илсе килме ыйтнă. Таксист нумай кĕттермен, наччасрах кӳрсе килнĕ, кусем вара самантрах кĕленчене пушатма ĕлкĕрнĕ. Иккĕшĕ пирус мăкăрлантарма тухнă вăхăтра К.М. Гаврилов çавăн пек паха тупрана хăй майлă çавăрнă пĕлĕшсене вăрлама сĕнет, кĕçех Мускава кайма тата телефон сутса тунă укçана пайласа пама шантарать. Акă ăçтан хĕмленсе тухнă та ĕнтĕ ку ĕç-пуç. Паллах, çул çитмен çамрăка тата Е.В. Казамбаева ку сĕнӳ килĕшнĕ. Ара камăн укçа-тенкĕ ĕçлесе илес килмĕ. Пилĕк çынран тăракан ушкăн уйрăлать, тепĕр самантран тĕл пулать, анчах та пачах урăх лару-тăрура. Каварçăсем хăйсен ĕçне пурнăçлаççĕ. Преступлени пуçаруçи вара хăй сăмахне тытмасть, шантарнă укçана памасть.

Çӳлерех асăннă телефона Мускав хулинчи Савелов пасарĕнче пĕр арçын туяннă, çапла майпа Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе мăшăрне саламлама шутланă. Анчах та телефон документсăр, заряд илмелли устройствăсăр пулнă. Туяннă телефон вăрланăскер пулнине пĕлсен вара мăшăр ют пурлăха милици ĕçченĕсене кайса панă.

Çапла вара преступлени пуçаруçи тĕлĕшпе çирĕп мера йышăнма тиврĕ, сăмах май вăл ăна тивĕç те. РФ УК 69 статьян 3 пайĕпе ăна ирĕкрен хăтармалла турĕç, суд залĕнчех унăн колоние ăсанмалла пулчĕ.

РФ УК 73 статйипе килĕшӳллĕн Е.В. Казамбаев тĕлĕшпе условлă срок йышăнма тиврĕ.

Ытла та шел, çамрăк çынсен пурнăçĕ эрехе пула аманать, айванлăха пула ĕмĕрлĕх хуçăлать. Акă шкул çулĕнчи çамрăк та ирĕк пурнăçа ытларах кăмăллать. Ун тĕлĕшпе профилактика ĕçĕсем те пĕрре мар ирттернĕ, анчах та калаçăвăн усси палăрмасть-ха хальлĕхе. Амăшĕ республика тулашне ĕçлеме çӳрет. Ашшĕне вара ырă енчен асăнма йывăртарах: эрех-сăрапа айкашать, ыттисем çине алă çĕклеме те иментест.

Чавса çывăх та çыртма çук тенĕ евĕр иртнĕ ĕçшĕн вăл ӳкĕнет. Халĕ ун тĕлĕшпе те условлă срок йышăнма тиврĕ. Çапларах пулса тухрĕ айванла ĕç-пуç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# 50 пăру ырă малашлăх кĕтет?..

**Симĕс ĕç çи маршручĕсемпе**

***Питрав çитрĕ. Çĕр ĕçченĕн анисенче утă уйăхĕ вăй илнĕ вăхăт: ĕнер акара тимленĕ хресчен паян иртен пуçласа каçчен выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре. Çапла пулмалла та, анчах юлашки кунсенчи çумăрлă çанталăк ял ĕçченне ку ĕçе çанă тавăрса кӳлĕнмешкĕн ниепле те ирĕк памарĕ. Лару-тăрăва пĕтĕмĕшле хак пама тата выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçри кăçалхи çĕнĕлĕхсемпе паллашма иртнĕ эрне кун, утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче, районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене тухрăмăр.***





Паянхи лару-тăру пирки мĕн калама пулать-ха? Çитес хĕл валли хуçалăхсем ĕç планĕсемпе пăхнă чухлĕ выльăх апачĕ хатĕрлеме пултарĕç-ши?

Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис., Ильич яч. хис., «Ударник» хуçалăхсенче ума лартнă ыйтусене хăйсен малашлăхĕ çине епле пăхса татса пани яр уççăн курăнчĕ. Çĕнĕлĕхсене алла илни те, ĕç çине алă сулни те, «çӳлтен» килсе пулăшасса шанни те куç умĕнчен каймарĕç. Эпир çитнĕ пур хуçалăхра та выльăх апачĕ хатĕрлессипе ĕç вĕретчĕ пулсан, Отарккăри ĕне фермине кĕрсен пурнăç урапи чарăнса ларнăн туйăнчĕ.

Хуçалăхри ут çи пуçламăш утăмĕсем паян кунта йăлтах куç умĕнче. Эпир çитнĕ чух фермăри ӳкерчĕк çакăн пекчĕ. Çум курăкĕ пусса илнĕ территорире ăçта мĕнле сарай вырнаçнине тӳрех уйăрса илме те хĕн. Ĕлĕкрех ферма çывăхĕнче капанĕ-капанĕпе е рулонĕ-рулонĕпе утă выртни паянхи ӳкерчĕк витĕр юмах евĕр курăнать. Ау! Ăçта кунта утă! Кӳршĕ сарайĕнчи выçăпа аптăранă пăрусем пирĕн сасса илтсе пĕр харăс сасă панинчен ферма территорийĕнче утă çуккине ĕнлантăмăр. Чăтаймарăмăр, сарай пуçĕнче лаша çуни çине çын ларса каймалăх пырса тăкнă утăна (вăл та нумай выртнипе саралса кайнăччĕ ĕнтĕ) алăпа çĕклесех пăрусене хурса патăмăр. Сарай пуçĕнче хушăра çӳрекен пăрусем макăрма чарăнчĕç, анчах инçетререх пӳлĕмсене хупнисем вара çакна курса тата хытăрах сас пама пуçларĕç... Вĕсене ăнланма пулать. Епле чăтăн-ха умра апат та, шыв та çук пулсан. Çак 50 пуç пăруран пурнăçкиле мĕнле пахалăхлă ĕне-выльăх пулĕ? Каçарăр та пирĕн хурав çук.

Ĕне сарайĕпе иртетпĕр те алăкĕ яр уçă сĕт цехĕнчи çуса хунă «хуçасăр» сĕт бидонĕсемпе ĕне сумалли аппаратсем алăсене кĕçĕтнине çĕнсе хуçасăрлăхпа малалла паллашатпăр. Умри «çаппа çарамас» пушар хăрушсăрлăх щичĕ фермăра инкек-синкек пирки шутламанни тата унран асăрханманни пирки евитлерĕ. Хуçасăрлăх хуçисем хăйсем кунта килсе курайман пулĕ тесе васкасах лару-тăрупа паллаштарма тата пăрушкасем валли пулăшу ыйтма тесе хуçалăх кантурне çитрĕмĕр... Анчах... Ау! Кунта та пире пушă пӳлĕмсем кăна кĕтсе илчĕç...

Пурте утăра ĕнтĕ тесе пĕтĕмлетӳ туса кӳршĕ хуçалăха çул тытрăмăр.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайне оперативлă тăратнă кăтартусемпе вара Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ çав кун тĕлне 70 тонна (70 процент) утă хатĕрленĕччĕ. Анчах вăл пирĕн куç тĕлне пулмарĕ. Тен эпир япăх шырарăмăр-ши? Çапла пултăрччĕ çеç. Сенаж-силос траншейисенче вара çӳллĕ ӳссе кайнă çум курăкне çĕр çумне тайса çил вылятчĕ. Хăçанччен пырĕ çакнашкал ӳкерчĕк?!

Хуçалăх ертӳçи И. Захаров сĕт панăшăн Муркашри сĕт заводĕ маларах вăхăтра кооператив умĕнче çур миллион тенкĕне яхăн парăма кĕрсе кайни паянхи ĕçсене ура хурать тесе ăнлантарни ыранхи пирки шутламалла мар тенине пĕлтермест вĕт-ха?

Ыйтусем нумай – тивĕçлĕ хуравĕ çук. Кашни утăмра курăк кашласа ӳснĕ чухне ĕнесем талăкра 3–5 килограмм сĕт пани тата пăрусем апатшăн антăхса кайса макăрни йĕркеллĕ япала марах. Вулаканăм, тен эсĕ урăхла шутлатăн?

**Т. АЛЕКСЕЕВА,**
**район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ;**
**О. ВОРОБЬЕВ,**
**выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци пуçлăхĕн çумĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: çум курăкĕ вите-сарайсене çын куçĕнчен «пытарать». Кунпа пĕрлех Отарккăра эпир ун витĕр ытти çĕрти пек хатĕр утăна та кураймарăмăр...; Кăçал та силос-сенаж янтăлама курăк çук теме именмеççĕ кунта.**

**Автор сăн ӳкерчĕксем.**

# Паянхи тĕп тĕллев – янтăланă утăна упрасси

**Пушар хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшар**

Çумăрлă пулин те шăрăх çу кунĕсем тăни ял çынни умне хушма йывăрлăхсем кăларса тăратать. Ку йывăрлăхсем пушар хăрушлăхĕпе çыхăннă. Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе килти хушма хуçалăхсенче çитес хĕл валли выльăх апачĕ хатĕрлессипе ĕçсем анлă пыраççĕ. Ыранхи кун пирки шутлани лайăх-ха та, анчах çак тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕ пирки самантлăха та манмасан ыранхи кун татах та тулăхрах пуласси пирки те иккĕленӳ çук. Кунта вара пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнасси малти вырăна тухать. Çĕр ĕçченĕн çак ответлă тапхăрĕнче «хĕрлĕ автан» вăй илсе сиен кӳресрен кашнийĕнех асăрханмалла: хирте те, килте те.

Ут çи – халăх та, техника та ĕçе массăллă явăçнă тапхăр, ыранхи куна çиччĕ виçсе ĕçлемелли вăхăт. Кунта пушар хăрушсăрлăхĕ малти вырăнта пулмалли пирки калама та кирлĕ мар ĕнтĕ, анчах...

Районта ут çи çулленех пушар тухаслăхпа пуян пулнипе палăрса тăрать. Тимлĕхе самантлăха çухатни вуншар тонна типĕтсе янтăланă утă-улăма кĕл тăвать, хаклă та паха техникăна юрăхсăра кăларать. Çынсем самантлăха тимлĕхе çухатнипе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те, уйрăм çынсен килĕсенче те утă хранилищисемпе сарайĕсем, капанĕсем, ĕç тăвакан техника нумай çунса кĕлленет. Çакна шута илсе тата ял ĕçченĕн халькхи хĕрӳ ĕç çийĕ вуткăвар алхаснипе ан тĕксĕмлентĕр тесе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çак ĕçсене кун йĕркине кĕртсе кая хăвармасăр пурнăçламалла:

1. Выльăх апачĕ хатĕрлекен тата упракан, ГСМ склачĕсене, машинăпа трактор паркĕсене, витаминлă курăк çăнăхĕ тунине тата упранине пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе комиссипе пăхса тухмалла. Çав вырăнсенче шыв, пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсем, çыхăну, пушар çинчен сасă парса пĕлтермелли устройствăсем пулмалла.
2. Выльăх апачĕ хатĕрлеме хутшăнакан ял ĕçченĕсене, механизаторсемпе водительсене ятарлă журналта алă пустарсах ĕç çинчи пушар хăрушсăрлăхĕн правилисемпе паллаштармалла.
3. Утă капанĕсене е утă рулонĕсене электричество линийĕсенчен 15 метртан, çул хĕрринчен 20 метртан, çуртсенчен 50 метртан кая мар вырнаçтармалла.
4. Утă çине хутшăнакан техникăна пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе тата хĕм сӳнтермелли устройствăсемпе тивĕçтермелле.

Хăрушсăрлăхшăн тăрăшса çак ансат правилăсене пурин те пурнăçламалла. Унпа пĕрлех çак хĕрӳ вăхăтра ведомствăлла пушар хурал ĕçченĕсен службине специалистсем тăратса вăйлатмалла. Пушар сӳнтерме пăхнă техникăна çителĕклĕ бензинпа, кирлĕ чухлĕ шывпа тытмалла, юсавсăр пушар машинисене ĕçе кĕртме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрленĕ выльăх апачĕ çитес хĕл кунĕсенче те производствăна хавшатмасăр тытса пыма пулăшĕ.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе паян туса ирттернĕ ĕç çывхаракан вырмара та ытлашши пулмасса шанатăп.

**А. ЕФИМОВ,**
**пушар надзор ĕç-хĕлĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан.**

**Миграци**

# Пулăшу кашнин валли

**Советсен çĕр-шывĕнче çуралса ӳснĕ пĕр тăвансем СССР саланса кайнă хыççăн вăл е ку сăлтава пула тăруках тĕрлĕ çĕр-шыв гражданĕсем пулса тăчĕç. Çывăхри ют çĕр-шывсенче пурăнакансене паян Раççее куçса килме пулăшу пуррине илтнĕччĕ. Тĕрĕс-и?**

**А. СУХМЕТОВА.**
**Мăн Шашкар ялĕ.**

***Вулакан ыйтăвĕпе эпир РФ федераллă миграци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн пуçлăхне Л. ПЛЕЧОВĂНА паллаштартăмăр. Унăн хуравĕ çапла пулчĕ:***

– Çĕнĕлĕх мар пулсан та вулавçă тĕрĕс ыйту хускатать. 2006 çулхи çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче РФ Президенчĕ хамăр çĕр-шывра çуралса ӳссе паян ют çĕр-шывсенче пурăнакан Раççей çыннисене хăйсен ирĕкĕпе пирĕн çĕр-шыва куçса килме тĕв тусан патшалăх пулăшăвĕ парасси пирки указ кăларнă. Унăн тĕллевĕ – пирĕн çĕр-шыва хăйсен ирĕкĕпе куçса килме шутланисене пулăшу парасси. Çакна валли хатĕрленĕ патшалăх программи 2012 çулччен ĕçлет. Çак программăпа пирĕн патăмăра куçса килекенсем социаллă пулăшăва тивĕçеççĕ.

**Пĕлме интереслĕ**

# Кăмари сăхасран сыхланма

***Эпир çуллахи вăхăта чăтăмсăр кĕтетпĕр. Анчах та çак вăхăтра пире йăлăхтарса çитерекен кăмарисем те хытă саванаççĕ. Вĕсенчен мĕнле сыхланмалла-ха?***

Малтанах пӳрте кăмарисем кĕме пултарассинчен сыхланмалла. Чӳречесем çине ятарлă сеткăсем вырнаçтармалла. Дача çурчĕ пулсан унăн чӳречи айĕнче помидор йăранне туни вырăнлă пулĕ. Мĕншĕн тесен кăмарисем помидор çеçкин шăршине тӳсме пултараймаççĕ. Пӳлĕмре вара герань чечекне ӳстермелле. Ăна та хурт-кăпшанкă кăмăлламасть.

Теприсем тата çывăрма выртас умĕн пӳртри урайне те, стенасемпе маччана та пылесоспа тасатса тухаççĕ. Çапла майпа пытанса юлма пултарнă кăмарисенчен те хăтăлма пулать.

Паллах лавккара сутакан тĕрлĕ хатĕрпе те усă курма юрать. Вăрмана каяс умĕн ӳте ятарлă кремсемпе сĕрмелле. Крема пит çине сĕрме юрамасть тесе сĕннине çирĕп пăхăнмалла. Çи-пуç çине сĕрмелли препаратсем те халĕ туллиех. Вĕсемпе пуринпе те пĕлсе усă курмалла.

Ачасем валли те репеллентсем чылай. Анчах та вĕсене сĕрес умĕн малтанах ачан крем çине аллерги çуккине тĕрĕслесе пăхмалла. Крема ытла вăйлă пусăмпа сĕрмелле мар.

# Çумăр шывĕ

Мĕн ĕлĕкренпех пахча çимĕç тата чечексем шăварма çумăр шывĕпе усă курнă. Çакă ăнсăртран мар. Çумăр шывĕ ăшă, çемçе, таса. Çапла вара вăл çимĕçсемшĕн чăннипех те сиплĕ им-çам вырăннех. Çумăр шывне пухни никамшăн та, нихăçан та ытлашши мар.

**Килти хушма хуçалăх**

# Çырла тимлĕх ыйтать

**Кăçал нӳрĕкĕ те çителĕклех ĕнтĕ. Ăшши те пур. Анчах пахчари хăмла çырли çимĕçĕ вĕтелсе кайрĕ. Ун çинче вĕтĕ хуртсем курăнма пуçларĕç. Мĕн тумалла-ши?**

**В. ИВАКОВ.**
**Мăн Сĕнтĕр сали.**

Куншăн тĕлĕнме те, кулянма та кирлĕ мар. Çакă сирĕн хăмла çырлине хĕвел çути лайăх ӳкекен вырăна куçармаллине систерекен паллă. Анчах хунавĕсене кивĕ лаптăкран ан илĕр. Унсăрăн вĕсемпе чир-чĕр те куçма пултарать. Çĕнĕ вырăна çамрăк та вăйлă хунавсем лартмалла. Хăмла çырли хурăн çырлипе кӳршĕллĕ пулмалла мар. Вĕсен сăтăрçисем пĕрре.

Кĕркунне лартмалли лаптăка тĕплĕн хатĕрлемелле: лайăх кăпкалатмалла та минераллă удобренисем, çĕрĕк тăпри хывмалла, шăвармалла, хунавсене 30–40 см кĕскетсе лартмалла. Сортне те шута илмелле. Ир пулаканнисенчен «Журавлик», «Ранний сюрприз», вăтам тата каярах пулаканнисенчен «Самарская плотная», «Награда», «Гусар» сортсем лайăх.

**В. МОРОЗОВ,**
**«Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи.**

**Объявление**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:280702:122, местоположение: установлено относительно ориентира, расположенного за пределами участка. Ориентир водонапорная башня. Участок находится примерно в 250 м. от ориентира по направлению на северо- восток. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Тиуши, для доведения личного подсобного хозяйства до 1 га, площадью 6750 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

# Регистраци паллин стандартсене тивĕçтермелле

**ГИБДД пĕлтерет**

Водительсем çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăхăннине вĕсен машинисен регистраци палли патшалăх стандарчĕсем ыйтнине тивĕçтерни те кĕрет.

Патшалăх автоинспекци сотрудникĕсем хальхи вăхăтра фотофиксаци мелĕпе анлăн усă кураççĕ. Çак мелпе ĕçленĕ чухне вара хăш-пĕр транспортăн патшалăх регистраци паллине вулама-курма май çук. Апла пулсан вĕсене патшалăх стандарчĕсене пăхăнмасăр туни куç кĕрет. Е тата вĕсем – суя паллăсем çеç.

Сăмахран, иртнĕ çур çулта республика территорийĕнчи çулсем çинчи тĕрĕслевсем тата техосмотрсем вăхăтĕнче йĕркене çакăн пек майпа пăснă 1921 тĕслĕх тупса палăртнă. Çапла вара йĕркене пăснă пур водителе те административлă майпа явап тыттарнă. Йĕркене пăхăнманнисен ретĕнче – пирĕн районти 29 водитель те.

Çӳлерех асăннă цифра пĕчĕк марри хушма мерăсем йышăнма хистет. Çавăнпа та июлĕн 15-мĕшĕччен пирĕн районта та «Регистраци палли» ятпа ятарлă вунă кунлăх иртет.

Водительсене транспортăн курăнман-вуланман регистраци паллисене вăхăтра улăштармалли пирки аса илтеретпĕр. Çула тухас умĕн машинăн регистраци палли таса пулнине те шута илмелле.

Вунă кунлăх вăхăтĕнче инспекторсем йĕркене пăсса хатĕрленĕ регистраци паллисемпе усă куракансене, «Транзит» регистраци паллин вăйра тăракан тапхăрĕ вĕçленнисене тата урăхла майпа регистраци паллипе йĕркене пăсса курнине тупса палăртассипе тимлеççĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ертӳçин тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлаканĕ.**

# Пирĕн пуласлăхшăн хăйне шеллемен

**Редакци почтинчен**

Паян эпир мирлĕ пурнăçпа пурăнатпăр. Çакăнта пирĕн асатте-асаннесен тӳпи питĕ пысăк тесе шутлатăп эпĕ. Акă манăн кукаçи те, маçак та хăрушă вăрçă çулĕсемпе утса тухнă. Пирĕн пуласлăхшăнах шеллемен вĕсем хăйсене.

Манăн кукаçи Борис Яковлевич Яковлев 1942 çулта март уйăхĕнче связиста вĕренсе тухнă пулнă. Апрель уйăхĕнче вара вĕсене çапăçу хирне илсе каякан поезд çине сасартăк тăшман бомбăсем пăрахма пуçланă. Нумай салтак çапăçу хирне çитмесĕрех пуç хунă.

Салтаксене Смоленск облаçĕнчи Велиж районне вырнаçтарнă. Кунта шăпах фронтăн малти линийĕ пулнă. Çакăнта кукаçин çыхăну йĕркелеме тивнĕ.

1943 çулхи октябрь уйăхĕнче вăл Çурçĕр Двина патне çитнĕ. Фронт линийĕ малаллах куççа пынă, анчах та вăраххăн. Вĕсене мина уйĕсем пысăк чăрмав кӳнĕ. Çапах та çыхăнăва ниме пăхмасăрах тытса тăмалла пулнă. Çакăнта вара кукаçи мина çинче сирпĕнсе кайса тăн çухатнă. Тăна кĕрсен вăл хăйĕн сулахай ури нимĕн те туйманнине ăнланса илет.

Мина лартса тухнă хире никам та кĕресшĕн пулман ĕнтĕ, кукаçи унтан хăех аран-аран упаленсе тухнă. Осколок ура тупанне лекнĕ. Часах гангрена пуçланнă. Салтаксем ăна пур-çук хатĕрпе пĕрремĕш пулăшу парса Ржев хулине ăсатнă. Унти госпитальте урине чĕр куççи таран татма лекнĕ. Анчах та хăрушă чир чарăнман: урана чĕр куççинчен çӳлерех татнă. Часах кукаçие Хусанти госпитале леçнĕ.

Çапла вара Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче кукаçи сулахай енчи урине, куçне, хăлхине çухатнă. 1944 çулхи июль уйăхĕнче вăл киле таврăннă. Кăкăрĕ çинче орден-медальсем ялкăшса тăнă, ури вырăнне вара протез лартма тивнĕ.

Çакăн пек асап курнисем пинĕ-пинĕпе пулнă хаяр вăрçăра. Çакна асра тытса, вĕсем пирĕншĕн çапăçнине шута илсе халĕ пурăнакан вăрçă ветеранĕсене хисеплесчĕ.

**А. ПЕТРОВА.**
Муркаш лицейĕ.

# Финансовая взаимопомощь становится доступнее и ближе для сельских жителей

СОДРУЖЕСТВО
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ

Оперативная финансовая взаимопомощь должна быть доступна не только городским, но и сельским жителям. Так считают в кредитном потребительском кооперативе «Содружество». КПК «Содружество» успешно работает в Чувашии с 2003 года. Центральный офис находится в г.Чебоксары, отделения кооператива работают в Республике Марий Эл (с.Виловатово), с.Красноармейское и г.Цивильске. Выполняя поставленные пайщиками на общем собрании задачи по расширению зоны обслуживания населения в Чувашской Республике, кооператив открыл 1 июня 2011 года очередное отделение в с.Моргауши.

Моргаушское отделение КПК «Содружество» предлагает членам кооператива (пайщикам) выгодные и доступные займы на любой «кошелек» - как для пенсионеров со сравнительно невысоким, но стабильным доходом, так и для работающего сельского населения. Займы предоставляются на срок от одного месяца до двух лет под приемлемые процентные ставки. Размер выдаваемого займа определяется исходя из дохода заемщика и обеспечения займа. Возможно получить небольшую сумму займа и без какого-либо обеспечения на короткий срок. Конкретные условия получения заемных средств определяются в ходе личной консультации у кредитного специалиста.

Вместе с «Содружеством» жители Моргаушского района решают свои насущные житейские вопросы. С начала работы моргаушского отделения выданы займы на самые разные потребительские цели – от срочной покупки новых автомобильных шин для личного автотранспорта (успеть до подорожания!), покраски автомобиля и приобретения в собственность самого автомобиля (мечта последних лет) до оплаты за лечение ребенка, покупки нарядного платья и туфель для выпускного бала дочери, подарка на свадьбу, регистрации семейного положения, приобретения стройматериалов для мелкого ремонта квартиры и газификации жилого дома на селе. Это далеко не полный перечень вопросов, с которыми обращаются жители района и получают реальную финансовую помощь.

Обращаем внимание семей, имеющих государственный сертификат на материнский капитал – вы можете эффективно его использовать, направив средства на покупку или строительство собственного жилья. В КПК «Содружество» установлены минимальные платежи при получении займа, оказывается полное юридическое сопровождение сделки по купле-продаже объекта недвижимости в регистрационной службе и пенсионном фонде, консультируют по вопросам сбора необходимых документов на строительство жилого дома, быстро оформляются договора займа и осуществляется выдача денежных средств.

Другим направлением деятельности кооператива является прием сбережений пайщиков на выгодных условиях. Для пенсионеров, инвалидов установлены надбавки от 1% до 1,5% к действующей процентной ставке. Сохранность привлеченных сбережений гарантируется резервным фондом КПК «Содружество» и имуществом кооператива, а также тем, что согласно Уставу сбережения членов кооператива направляются исключительно на выдачу займов пайщикам. С учетом пожеланий пайщиков и для их удобства предусмотрено частичное снятие сбережений с сохранением процентной ставки по договору. В настоящее время в кооперативе проводится летняя акция по сбережениям. При оформлении договора о передаче личных сбережений на срок один год (с получением процентов ежемесячно или в конце срока действия договора) установлены повышенные процентные ставки. Размер процентов зависит от суммы сбережений и составляет от 14,5% годовых и выше. Срок действия акции до 31 августа 2011 года.

**Узнать подробнее об условиях выдачи займов и приема сбережений приглашаем в офис кооператива по адресу: с.Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.23 (второй этаж), тел.: 8-919-673-42-19.**

## Прогноз погоды

| | среда 13 июля | | | | четверг 14 июля | | | | пятница 15 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +16 | +24 | +26 | +20 | +20 | +23 | +24 | +18 | +17 | +23 | +24 | +18 |
| Давление мм | 746 | 746 | 746 | 745 | 746 | 745 | 746 | 745 | 747 | 746 | 747 | 746 |
| Влажность % | 86 | 61 | 48 | 69 | 89 | 84 | 56 | 68 | 92 | 61 | 46 | 70 |
| Ветер | З | З | С-З | Ю-З | З | С-З | С-З | Ю-З | Ю-З | С-З | С-З | З |
| м/с | 3 | 3 | 4 | 3 | 3 | 3 | 7 | 2 | 2 | 2 | 5 | 1 |
| Солнце восход/заход | | 04:25 | 21:32 | | | 04:26 | 21:31 | | | 04:27 | 21:29 | |
| Луна восход/заход | | 20:07 | 02:12 | | | 20:45 | 03:19 | | | 21:12 | 04:35 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |




## Пĕлтерӳсем. Объявления




**Организации требуются на постоянную работу водители маршрутных автобусов категории В, С, Д на а/м «Ивеко», «Форд», «Паз-Реал», соц. пакет, оплата от 20 тыс. руб. Доставка служебным транспортом.**
**Тел.: 8(8352)28-16-23, 63-06-27.**

* * *

**Продаю: двигатель 402 УМЗ 100 в разобранном состоянии; доильный аппарат; козу белую.**
**Тел.: 8-905-347-58-15.**

* * *

**Продаю сено. Тел.: 8-960-306-92-30. Люба.**

* * *

**Продается зерно. Тел.: 8-927-990-32-82.**

* * *

**Продается недостроенный кирпичный дом, разм. 13мх14м, крыша – металлочерепица, с земельным участком 0,25 га, на ровном месте, недалеко от реки Волга, рядом сад, лес. Тел.: 8-919-665-04-32, 65-5-22.**

* * *

**Продается кирпичный дом с надворными постройками в с. Юськасы, дом газифицирован, уличное электроснабжение, земля в собственности, 0,40 га.**
**Тел.: 8-902-660-53-57, 8-902-660-38-70. Цена договорная.**

* * *

**Требуются студенты на стройку: штукатуры, монтажники навесного вентилируемого фасада.**
**Тел.: 8-961-333-47-32. 4-5.**

* * *

**В МУЗ «Моргаушская ЦРБ» требуется электрик.**
**Тел.: 62-6-34, 62-7-07.**

* * *

**Вăкăрсем, тынасем, пăрусем, сурăхсемпе такасем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 2-2.**

* * *

**ОАО «Ядринмолоко» требуются: арматурщики, сварщики, плотники-бетонщики, прораб. Заработная плата сдельная. Предоставляется жилье. Полный соц. пакет. Телефон для справок: (883547)23-8-42.**

* * *

**Большесундырскому райпо требуется электрик с группой доступа до 1000 в и выше. Обращаться в отдел кадров райпо по тел.: 69-546.**

**Кредитный потребительский кооператив «СОДРУЖЕСТВО»:**

**ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ ПАЙЩИКАМ**
**на любые неотложные цели, а также на покупку и строительство жилья с использованием средств материнского капитала. Низкие процентные ставки, доступно и оперативно;**

**ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ ПАЙЩИКОВ**
**на привлекательных условиях. Действуют льготные ставки для пенсионеров, инвалидов.**

**Наш адрес: с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23 (здание ОАО «Моргаушскавтотехсервис», 2 этаж), тел.8-919-673-42-19. 6-6.**
www.kpksodrugestvo.ru

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:270101:85, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Вурманкасы, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 2747 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:030301:110, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, для сельскохозяйственного производства, площадью 22922 кв.м.;**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ НИКОЛАЕВА Н.Н.**
**Пичете панă 12.07.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4282.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.